*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

98 (2510) №
Хакĕ ирĕклĕ

1991 çулхи апрелĕн
21-мĕшĕнче тухма тытăннă

# ХРЕСЧЕН САССИ

КАНУ КУНĔН КĂЛАРĂМĔ

ЭРНЕКУН

2014,
декабрь/раштав, 19



## КĔСКЕН

**Ĕнер Мускавра Раççей Президенчĕ Владимир Путин пресс-конференци ирттернĕ. Тĕп вырăнта экономикăпа тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсем пулнă.**

**Канаш районĕнчи Янкăлч ял тăрăхĕнче Валерий Михайлович Никонов фермер хуçалăхĕнче 100 пуç вырнаçмалăх ĕне вити хута кайнă. Ăна уçнă çĕре ялхуçалăх министрĕ Сергей Павлов хутшăннă. Никоновсем çемье фермине аталантарас тĕллĕшпе ирттерекен конкурса хутшăнса 5 млн тенкĕлĕх гранта тивĕçнĕ. «Россельхозбанкран» 2,5 млн тенкĕлĕх кредит илнĕ. Пĕтĕмпе фермăна туса пĕтерме 8,3 млн тенкĕ тухса кайнă.**

**ЧР Ялхуçалăх министерстви пĕлтернĕ тăрăх – 2003 çултанпа яла аталантарма йышăннă тĕрлĕ программăпа килĕшӳллĕн ялта пурăнакан 7720 çемьене çуртпа тивĕçтернĕ, вăл шутран 4826-шĕ – çамрăк çемье. Ку тĕллĕшпе çитес çул та ĕçлесшĕн, унсăр пуçне ялти пĕлтерĕшлĕ объектсем патне çитерекен автомобиль çулĕсене те юсама палăртаççĕ.**

**«Хыпар» Издательство çурчĕ 16 кăларăм кăларса тăрать. Иртнĕ ытларикун унта ĕçлекенсен пысăк ушкăнĕ Вăрмар районĕнче пулчĕ. Çитес ытларикун журналистсем Вăрнара çитĕç.**

**Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин органĕсене кăçалхи 11 уйăхра ĕç вырăнĕ шыраса 47101 çын пынă, вĕсенчен 40696-шне ĕç тупса панă.**

## Çĕрсĕр хăвармĕç. Ĕрчевлĕ те хунавлă пулар

**Нумай ачаллă çемьесене çĕрпе тӳлевсĕр тивĕçтересси Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Указĕпе килĕшӳллĕн пулса пырать. Камсене параççĕ-ха ăна? Йĕрки мĕнлерех? Саккуна йышăннăранпа, 2011 çултанпа, мĕнле улшăнусем пулса иртнĕ? Çак ыйтусене ЧР пурлăхпа çĕр хутшăнăвĕсен министрĕ Анатолий КУЗЬМИН хуравлать.**

– 2014 çулхи мартăн 26-мĕшĕнче Михаил Игнатьев саккуна хăш-пĕр улшăну кĕртрĕ. Çĕр илме черете тăнă йышлă ачаллă çемье хушма хуçалăх тытса пымалли лаптăка хăй суйласа илме пултарать.

Саккунпах республикăпа муниципалитет çĕрне кăна мар, федераци харпăрлăхĕнчине те пама пăхнă. Маларах çемье хăйсене уйăрса панă лаптăка илмесĕр тăрсан, палăртнă вăхăт тĕлне заявлени çырса памасан ăна Реестртан кăларнă пулсан, халĕ çакна пăрахăçланă.

**– Хальлĕхе çĕр лаптăкĕпе миçе çемьене тивĕçтернĕ?**

– Паянхи куна вырăнти хăйтытăмлăх органĕсене çĕрпе тивĕçтерме ыйтса 5222 çемье заявлени тăратнă. Пĕтĕмпе вара 2014 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикăра нумай ачаллă 9816 çемьене шута илнĕ.

Заявлени çырнисенчен 3449-ăшĕ (66 процент) çĕр лаптăкне пурăнмалли уйрăм çурт тума илесшĕн,

1481-ĕшĕ (28 процент) – хушма хуçалăх тытма,

292-шĕ (6 процент) – дача тума.

Çĕрлĕ пулас текенсем уйрăмах Шупашкарпа (1739 çемье) Çĕнĕ Шупашкар (495) хулисенче, Шупашкар районĕнче (532) нумай. Декабрь тĕлне пĕтĕмпе 2799 çĕр лаптăкĕ уйăрнă. Урăхла каласан, шута илнĕ çемьесен 54 процентне çĕрпе тивĕçтернĕ.

*2011 çулта 491 çемье çĕрлĕ пулнă, 2012 çулта – 514 çемье, 2013 – 817, 2014 çулхи 11 уйăхра – 977 çемье.*

Пĕтĕмпе нумай ачаллă çемьесене 317,8 гектар çĕр панă. Вăл шутран 64 процентне пурăнмалли уйрăм çурт тума; 34 процентне – хушма хуçалăх йĕркелеме; 2 процентне – дача тума.

2-мĕш стр. ➔

## ЯЛ-ЙЫШ — КИЛ — ХӲТЛĔХ — СЫВЛĂХ — ТĔПЕЛ

**ПАЯН** кун тăршшĕ 7 сехет те 00 минут. Уйăх катăлса пырать.

Хĕллехи Микула кунĕ. Суту-илӳ килĕшĕвĕ тумалли ăнăçлă кун. Микула кунĕ умĕн йывăççене пас тытсан сĕлĕ ăнса пулĕ тенĕ.

**ЫРАН** – Амвросий кунĕ. Çак кунран Раштав уявне хатĕрленме тытăннă. Хĕвел пĕлĕт хыçне пытансан – юр çăвĕ. Çанталăк сивĕ пулсан çур йĕпе-сапаллă, çу шăрăх пулĕ.

**ВИÇМИНЕ** – Анфиса кунĕнче – хĕрсем килтен тухма шикленнĕ, усал-тĕсел çыпăçасран, куç ӳкесрен хăранă. Алĕçĕпе аппаланнă. Чи кĕске кун. Шартлама сивĕсен пуçламăшĕ.

### ЫЙТУ – ХУРАВ

## Сурăх тирне ăçта хумалла?

**? Таврана шур юр витсен ял çынни выльăх пусма тытăнать. Ĕлĕк сурăх пусан тирне вырнаçтарма пулатчĕ. Ятарлă пунктсем пурччĕ. Халĕ ниçта хума çук. Тир завочĕсем хупăнса пĕтмен пулĕ те? Е чăвашра тиртен нимĕн тума та пĕлмесççĕ-и?**

**Геннадий НИКОЛАЕВ. Çĕрпӳ районĕ, Çуткасси.**

Хаклă вулаканăмăр, пирĕн республикăра сурăх тирĕнчен алсишран пуçласа çĕлĕк-кĕрĕк таранах тăваççĕ-ха. Анчах хальхи вăхăтра тир пуçтармаççĕ. Шупашкарти «Кĕрĕк» хупă акционер пĕрлешĕвĕпе çыхăнтăмăр. «Ноябрĕн 1-мĕшĕнчен тир пухма чарăнтăмăр. Çулталăк ĕçлемелĕх пухса хунă, – терĕç вĕсем. – Çитес сезон август уйăхĕнчен уçăлать».

Чăвашпотребсоюзăн ялхуçалăх продукцийĕпе чĕртавара пухса вырнаçтарассипе ĕçлекен пай специалисчĕсем те кĕркуннерен тир пухманнине пĕлтерчĕç. Çакна тире вырнаçтарма чăрмавлă пулнипе, заводсем ăна хăйсене кирлĕ чухлĕ çеç туяннипе çыхăнтарчĕç. Тепĕр чух уйрăм çынсем ял-ял тăрăх тир пуçтарса çӳренине асăрхатăн. Çавсен тĕлне пулсан кăна ĕнтĕ.

## Качака мар, хуçи айăплă

**? Пуçласа качака тытатпăр. Сĕтне аван парать, анчах шăршă пуррипе ĕçме кăмăллах мар. Апрель уйăхĕнче вăл пăранламалла. Мĕнлерех пăхмалли шухăшлаттарать.**

**Евгения АЛЕКСАНДРОВА. Элĕк районĕ.**

Чăн та, качака сĕтĕнчен хăйне евĕр шăршă кĕме пултарать. Анчах çакăншăн качака мар, унăн хуçи айăплă. Выльăха таса витере тытсан, çиллине ăшă шывпа çуса лайăх типĕтсен, таса савăт-сапапа усă курсан, таса алăпа сусан сĕтрен кăмăлла пăсакан шăршă кĕмелле мар. Качака такине амипе пĕр витерех тытсан унран тухакан каприл кислотин шăрши сăвакан качака çăмне, апатне, айсарăмне çапать. Çакна та астумалла: качакана эрнере пĕр хут та пулин тимĕр турапа е щеткăпа турамасан тар шăтăкĕсем хупланаççĕ, çавна май ӳтрен тухакан тасамарлăх сĕте лекет. **Сĕт пахалăхне тутанса пăхмасăрах пĕлмелли ансат меслет пур: качакан пуçне шăршласа пăхмалла, усал шăршă кĕмесен сĕтрен те ырă мар шăршă кĕмĕ.**

Качакана кунне 2 кг утă кирлĕ, такине – 3 кг, путеккине – 1кг. Чĕкĕнтĕр, кишĕр, купăста çулçи çитерсен аван. Хĕлле качакана кунне 3 хут çитермелле: ирпе 6-7 сехетре, кăнтăрла, каçпа 7 сехетре. Шăрша питĕ лайăх туйнăран вĕсем кăвакарма пуçланă е хĕрсе кайнă курăка çимеççĕ. Çавăнпа та çĕнĕрен апат хурса париччен валашкана тасатмалла. Пăранличчен 2 уйăх юлсан уйрăмах тимлĕ пăхмалла. Паха апат çитермелле. Ытларах белоклă апат, минерал вещесвисем памалла. Рационра кальципе фосфор çитмесен ырă-сывă путек çуралмĕ. Пĕтĕ качакана кунне 2 кг лайăх утă, 1,5-2 кг техĕмлĕ апат (чĕкĕнтĕр, çĕрулми, кишĕр, купăста, апат-çимĕç юлашки), 400 г концентрат çитермелле. Качака тăракан вырăнта типĕ пулмалла. Вите тăррипче вара нимĕнле утă та пулмалла мар, айсарăм саппасĕ çеç.

## Çăмарта туччăр

Хĕлле те çăмарта лайăх туччăр тесен чăх-чĕпе уйăхра икĕ хут пулă кунĕ туса памалла. Мăйва пĕçерсе ăна вĕтетмелле, кăшт тырă хушса валашкана хумалла. Çавăн пекех уйăхра икĕ хут тулă шăтарса памалла: тырра 12 сехетлĕхе ăшă шывра шӳтермелле. Вăл сăмсаланма пуçласан çĕрпе, 3-4 кашăк сахăр е варени, ыраш çăкăрĕн хытти хушса тата 12 сехет лартмалла. Унтан ăна валашкана хурса памалла. Çапла майпа чăх организмне питĕ нумай витаминпа аминокислот лекет. Çакна тума пултарнишĕн хăвăрăн та кăмăл тулĕ.

### ПĔЧĔК ВĂРТТĂНЛĂХСЕМ

✓ Пасар çĕпри пӳлĕмри чечекшĕн паха апат. Çĕпрере ӳсен-тăрана ӳсме кирлĕ усăллă ăпала нумай. Çĕпре чечек савăтĕнчи тăпра микрофлорине аванлатать. Çĕпре шывне çапла хатĕрлеççĕ: 1 л лĕп шывра 10 г пасар çĕпри тата 1 кашăк сахăр ирĕлтермелле. Ал айĕнче ахаль çĕпре пулмасан типĕтни те юрать: 10 л шывра ăна 1 г чухлĕ (чей кашăкĕн пĕрре тăваттăмĕш пайĕ) тата 3 кашăк сахăр ирĕлтермелле. Ӳсен-тăрана унпа тӳрех апатлантармалла мар, 2 сехете яхăн тăрăлантарса лартмалла. Унтан ăна таса шывпа (1:5) хутăштарса чечеке шăвармалла.

✓ Хăйăрлă тата вак чуллă çĕр çинче ӳсекен улма-çырла йывăççĕсен тымарĕсем сивĕпе уйрăмах шар кураççĕ. Тухăçĕпе савăнтарнă, çимĕçне кая юлса татнă улмуççисене уйрăмах тимлĕ пăхмалла. Юр сахал пулсан ăна таврăран, çулсем çинчен хырса йывăç йĕри-тавра хумалла.

✓ Ку таранччен те йывăççем çинче хытса пĕрĕннĕ çимĕçсем, хурт-кăпшанкă йăви, çулçă çакăнса тăрсан вĕсене илсе çунтармалла.

✓ Йывăça хĕвелрен хӳтĕлесе шуратни çийĕнсе пĕтсен çанталăк ăшăтнă вăхăтра ăна тепĕр хут шуратмалла. Çакна сывлăш температури 5 градусран сивĕрех мар чухне тумалла.

✓ Хĕлле минерал удобренийĕн саппасне çĕнетме, тĕрлĕ химикат туянма, йывăç кĕлне пухма вăхăт.

# Шăмăршăсене пулăшма

Пенси фончĕ Чăваш Енри Социаллă программăна аталантарма тата 13 миллион тенкĕ хушса уйăрнă. **Социаллă программăна укçа-тенкĕ ытларах уйăрассине Михаил Игнатьев пуçарăвĕпе ўстернĕ.** Ку укçа Шăмăршăри халăха пулăшу кўрекен социаллă центрăн вăхăтлăха пурăнмалли уйрăмне туса пĕтерме кайĕ. Çакăн чухлех укçа республика бюджетĕнчен те уйăрнă, мĕншĕн тесен Социаллă программăна Раççей Пенси фончĕпе Чăваш Республикин Правительстви пĕрешкелех укçа уйăрса тăрать.

Чăваш Республикин Социаллă программине финанслама Пенси фончĕ кăçал 15,6 млн тенкĕ хывнă. Шăмăршăри культура центрĕсĕр пуçне ватăсен сывлăхне çирĕплетекен «Вега» центра, халăха пулăшу кўрекен Муркашри центра тата Кўкеçри ача-пăча интернат çуртне укçа уйăрнă.

Раççей Пенси фончĕ регионсенчи социаллă программăсене 2000 çултанпа пулăшать. Ку таранччен Пенси фончĕ халăха социаллă пулăшу кўрекен учрежденисен пурлăхпа техника базине çирĕплетме тата юсаса çĕнетме Чăваш Республикине 270 млн тенкĕ куçарнă.

# Çĕрсĕр хăвармĕç. Ĕрчевлĕ те хунавлă пулар

1-мĕш стр.

**– Анатолий Иванович, çĕр лаптăкĕпе тивĕçтересси еплерех пулса пырать? 5222 çемьене шута илнĕ терĕр, вĕсенчен 1739-ăшĕ – Шупашкарсем. Хуласенче çĕр çитет-и?**

– Йышлă ачаллă çемьесене çĕрпе тивĕçтерессине Чăваш Республикин Правительстви тĕрĕслесе тăрать. Вырăнти хăйтытăмлăх органĕсен шута илнĕ çемьесене çĕрпе тивĕçтермелле. Паянхи куна Улатăр, Канаш, Пăрачкав районĕсенче çĕр лаптăкĕпе туллин тивĕçтернĕ. Шăмăршă (99 процент), Етĕрне (97), Куславкка (90), Йĕпреç (80), Çĕмĕрле (75), Комсомольски (73) районĕсенче тата Улатăр хулинче (77) çĕр уйăрса парасси калкал пырать.

Хула округĕсенче вара ку тĕлĕшпе йывăрлăхсем пур. Калăпăр, Çĕнĕ Шупашкарта çĕр ыйтакансен 7 процентне кăна тивĕçтернĕ, Çĕмĕрлере – 18, Канашра –19. Çакă тўрремĕнех çĕр çитменнипе çыхăннă. Кун пек чухне йывăрлăхран тухма çывăхри районсен çĕрне пĕр муниципалитетран тепĕрне куçарассĕ. Пушă çĕрсене тупса палăртма «халăх инвентаризацийĕ» ирттерни те пулăшать.

Сĕнтĕрвăрри, Муркаш, Çĕрпў, Канаш, Шупашкар районĕсенчи ял тăрăхĕсем ялхуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене хăйсен ял чиккине кĕртессипе ĕçлеççĕ.

Муркаш районĕнчи Катькас ял тăрăхĕнче вырнаçнă 118 гектар лаптăка Шупашкар хулипе Муркаш районĕн харпăрлăхне куçарнă. Вĕсенчен 680 çĕр лаптăкĕ йĕркелесе нумай ачаллă 597 çемьене çĕрпе тивĕçтернĕ. Сĕнтĕрвăрри хула чиккине 31 гектар çĕр кĕртсен Çĕнĕ Шупашкар харпăрлăхне 78 çĕр лаптăкĕ куçарнă. Çавăн пекех Çĕнĕ Шупашкара Çĕрпў районĕнчи Рынкă ял тăрăхĕнчен 23,8 гектар çĕр куçарнă. Çĕнĕ çултан ку лаптăксене нумай ачаллă çемьесене валеçсе парĕç.

Канаш хула администрацийĕ Ухман ялĕ çывăхĕнчи 10,2 гектар çĕртен 56 пай кăларса çулталăк вĕçлениччен унпа çĕр ыйтакан çемьесене тивĕçтерĕ.

Ку тĕлĕшпе ĕçсем малалла пыраççĕ.

**– Анатолий Иванович, çĕр лаптăкĕллĕ пулас тесен чи малтан ăçта каймалла?**

– Çĕрлĕ пулма ирĕк пур нумай ачаллă çемьен вырăнти хăйтытăмлăх органне тўлевсĕр çĕр илме учета тăмалла. Çĕр лаптăкĕ пулсан ăна çийĕнчех парĕç. Çук тăк – кĕтме тивĕ. Каярах вăл е ку лаптăка харпăрлăха тўлевсĕр панине пĕлтерсе хут ярса парĕç.

Çĕр лаптăкне пĕр хут çеç параççĕ. Йышлă ачаллă çемье маларах тўлевсĕр çĕр илнĕ пулсан ăна иккĕмĕш хут тўлевсĕр çĕр памĕç. Унсăр пуçне республикăри мĕнпур хăйтытăмлăх органĕсем тўлевсĕр çĕр лаптăкĕ илнĕ нумай ачаллă çемьесене пирвайхи виçĕ çулта çĕр налукĕнчен хăтарма йышăннă.

**– Çĕр лаптăкне харпăрлăха илес тесен нумай ачаллă çемьен мĕнле документсем тăратмалла?**

– Заявлени çыраканăн тата çемьери пур çыннăн та хăйсем кам пулнине çирĕплетекен документсен копийĕсем пулмалла, мăшăрланнине ĕнентерекен свидетельство копийĕ тата ача усрава илнĕ пулсан çакăн çинчен калакан суд йышăнăвĕ е опека органĕ панă акт копийĕ кирлĕ.

**Елена НИКОЛАЕВА.**

## ЭСИР ЫЙТНĂЧЧĔ

### Пылак юрататăп

**? Диабет пуçланнине ăçтан пĕлмелле? Калăпăр, эпĕ питĕ торт тата пирожнăй çиме юрататăп. Манпа кўршĕллĕ пурăнакан хĕрарăм вара вĕсене чăтма пултараймасть, анчах вăл диабетпа чирлине пĕлтĕм.**

Людмила ПАВЛОВА.

Пылак çиме юратни усăллă мар паллах, анчах иккĕмĕш типлă диабет палли шутланмасть. Диабет паллисем пачах урăххисем. Пĕрремĕшĕнчен, тăтăшах шыв ĕçес килни. Ăшша пиçсе чупса килнĕ хыççăн харăсах икĕ стакан шыв ĕçме пулать, анчах çакăн хыççăн каллех ĕçес килни – хытах сисчĕвлентермелле.

Иккĕмĕшĕнчен, час-часах шăрас килни. Шыв тытăнса тăманнипе организм шывсăрланать.

Виççĕмĕшĕнчен, ўт питĕ типĕ пулни тата кĕçĕтни, уйрăмах хул айĕнчи, пĕç хушшинчи хутламсем канăçсăрлантарассĕ.

Тăваттăмĕшĕнчен, тăтăшах ывăннине туйни. Тин çеç çывăрса тăрсан та çын хăйне ывăннăн туять. Чăннипе вара, инсулин çитменнипе мĕнпур орган апат çитменнине туять – мĕншĕн тесен инсулин кăна юнри глюкозăна пирĕн органри клеткăсене илсе пырать. Çавăнпа ĕнтĕ пуç ыратать, чĕре чăхămлать тата ытти те.

Асăннă симптомсем чи малтанах 1-мĕш типлă диабет чухне палăраççĕ. Çын уйăх-уйăх çурăрах 10-15 кг таран чакса кайма пултарать. Тепĕр чух ачан ура çине тăрса шкула кайма та вăй юлмасть: пуçĕ çаврăнать, хырăмĕ ыратать, вĕрилентерет. Ашшĕ-амăшĕ ачине пулăшма хăтланса ытларах углевод, шоколад парать, кофе ĕçме хистет. Ку вара ахаль те йывăр ларутăрăва пушшех те çивĕчлетет. Ача начарланма, пĕрмаях ывăнма пуçласан тўрех тухтăр патне каймалла, юнри сахăр шайне тĕрĕслемелле.

Иккĕмĕш типлă диабет пуçланнине вара чылай чухне кая юлса çеç пĕлетпĕр. Чир майĕпен, вăрттăн аталаннипе хăрушă. Тăтăшах сывлăш пўлĕннине туйсан, самăрăлса пырсан, юн пусăмĕ хăпарсан – сахăр шайне тĕрĕслетермелле. Çемьере кам та пулин диабетпа чирлĕ пулсан та çийĕнчех тухтăр патне каймалла.

## КАМĂН МĔН ЫРАТАТЬ?

**Юн пусăмне йĕркелеме.** Хĕрен тымарне теркăламалла. Вĕретсе сивĕтнĕ 1 стакан шыва ăна 1 кашăк чухлĕ ярса 36 сехет тăрăхтарса лартмалла. Сăрăхтармалла, пĕрер кашăк пыл, хĕрлĕ кăшманпа кишĕр сĕткенĕсем тата вăтам лимон сĕткенĕ хушмалла. Çакна кунне 3 хут, апат умĕн, пĕрер кашăк ĕçмелле. Сиплев тапхăрĕ – хăвăра лайăх туйма пуçличчен.

**Юнри сахăр шайне чакарма.** Термоса 30-40 лавр çулçипе тин вĕретнĕ çур литр шыв ярса 3-4 сехет лартмалла. Ирпе выçварла тата апат çиес умĕн икшер кашăк ĕçмелле. Çапла кунне 3-4 хут.

**Гайморитран.** Лавр çулçипе туса лартнă çу гайморитран аван: 1 стакан тип çу çине 30 г чухлĕ типĕтсе вĕтетнĕ лавр çулçи ямалла. Тĕттĕм вырăнта 30 кун тытмалла, сăрăхтармалла. Ăна сăмса шăтăкне кунне 2-3 хут пĕрер тумлам тумлатмалла.



## ШУТА ИЛМЕ

### Юн ушкăнне кура

*Çыннăн юнĕ миçемĕш ушкăна кĕни тăрăх унăн сывлăхĕ пирки те тĕшмĕртме пулать. Психологсен шучĕпе I ушкăна кĕрекенсем вăйлă характерлă çынсем, II ушкăнрисем – ырă кăмăллă çынсем, III ушкăна лекекенсем никама пăхăнманлăхĕпе, çул çўреме юратнипе уйрăлса тăраççĕ. IV ушкăнрисем – çăмăл характерлă пулнипе тата пултарулăхĕпе паллă.*

**I ушкăн – авалтан килет**

Чи авал пурăннă çынсен юнĕ ку. Апат-çимĕçе тиркесе çимен вĕсем. Анчах хальхисенчен нумайăшĕ авалхи йăх-несĕлĕмĕр пек пурне те çиме пултараймасть. Хырăмлăх язви çак ушкăнри çынсен темиçе хут ытларах тĕл пулни паллă. Ыттисенчен ытларах гастрит, колит, аллерги, астма, ват хăмпи шыççи, инсульт палăрать. Ўпре таврашĕ пĕрремĕш ушкăнри юна ĕçме юратать.

Çак ушкăнри çынсене белоклă апат, çуллă мар аш-какай, пулă çиме сĕнеççĕ. Çăкăрпа тата сĕт-турăхпа асăрханулларах пулмалла. Самăрăлса каясран тăтăшах хусканусем тумалла.

**II ушкăн – чĕрепе асăрханмалла**

Пурнăç условийĕсем улшăннипе пулнăскер вăл. Çак ушкăна кĕрекенсем ытларах усал шыçă чирĕсемпе чирлеççĕ. Пневмони, ревматизм, сахăр диабечĕ, инфаркт çулăхать.

Ытларах пахча çимĕçпе улма-çырла, пулă тавраше çимелле. Спортпа çине тăрсах кĕрешни усса каймасан та пултарать. Лăпкăлăх кирлĕ. Ўтпе шухăш пĕр тĕвĕре пулни вĕсемшĕн пĕлтерĕшлĕрех. Йогăпа кăсăкланни пулăшмалла.

**III ушкăн – пыртан ярса илет**

Виççĕмĕш ушкăн климат улшăнăвĕсене пула пулнă. Çынсен пĕр вырăнтан теприне куçма тивнĕ. Пур чухне те ырă улшăнусем пулнă теейĕн. Çак ушкăнрисен карланкăпа хăлха ыратнипе час-часах отоларинголог патне кайма тивет. Цистит, гонорея, стрептококк инфекцийĕ, пўре шыççи, радикулит чирĕсем юратарах параççĕ вĕсене. Суран тавраşĕ часах ўт илеймесĕр тарăхтарать.

Ытларах сĕт-турăх ĕçмелле. Шывра ишни, çуран чупни, хăвăрт утни, лашапа е велосипедпа çўрени сывлăха çирĕплетме пулăшĕ.

**IV – иммунитета çирĕплетмелле**

Чи çамрăк та сайра тĕл пулакан ушкăн. Кунашкал ушкăнлисен иммунитечĕ хавшак. Çавăнпах вĕсем тăтăшах шăнса пăсăлаççĕ, инфекциллĕ чирсем çаклатаççĕ. Юн пусăмĕ тăруках хăпарса кайнипе, инсультпа аптраса ўкеççĕ. Ўттир, гайморит, анеми чирĕсемпе канăçсăрланаççĕ.

Кирек мĕн те çиме юрать, анчах виçеллĕ çеç, çапах та аш-какайран ытларах пулă çимелле. Иммунитет тытăмне çирĕплетмелле.

## «КАПКĂН» КĔТЕСĔ




*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куричен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*


## РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРЎСЕМ

*СУТАТĂП / ПРОДАЮ*

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89674704677.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89674704677.

**4. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5. Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 37-28-74.

**14. Станки для валяния валенок.** Т.: 8-927-861-75-89, 8-937-381-05-85.

**15. КИРПИЧ.** Т. 89613393363.

**21. Керамблоки**, гравмассу, песок. Т. 89033456307.

**22.** Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Дёшево. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89370101054.**

**23. Гравмассу,** песок, бой кирпича, **щебень.** Д-ка. Т. 89061355241.

**24. Грабли,** косилки, **сажалки,** копалки, **окучники, опрыскиватели.** Доставка. Т. 89278533596.

**33. Гравмассу, песок, щебень, керамзит.** Недорого. Доставка. Т. 89053465671.

**49. Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

**53. ОТРУБИ, зерно,** к/корм, сахар, **муку.** Д-ка. Т. 89373916016.

**58. Гравмассу,** щебень, песок, **керамзит, чернозем.** Д-ка. Т. 89276687015.

**177. Кирпич** красный одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный (все цвета), **половняк, КББ** 20х20х40, 20х12х40, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором.Т.: 44-20-97, 89033582097.

## СĔТЕЛĔР ТУЛĂХ ПУЛТĂР

### Уяв салачĕ

Хатĕрленĕ çимĕçсене савăта сийĕн-сийĕн çак йĕркепе хумалла: теркăланă хĕрлĕ кăшманпа ыхра, теркăланă çĕрулми, 3 çăмарта шурри, вĕтĕ-вĕтĕ туранă ĕне ашĕ, çурма ункă туса каснă сухан, çăмарта сарри, вĕтетнĕ аçтăрхан măйăрĕ. Кашни сий хыççăн пăрăçпа хутăштарнă майонез сĕрмелле.

### Рагу – ашпа, купăстапа

**1 кг ĕне ашĕ, 500 г купăста, 1-2 пуç сухан, 2 шăл ыхра, 2 кашăк тип çу, тăвар, пăрăç.**

Ĕне ашне пысăках мар татăксем туса касмалла, кастрюле хумалла. Суханпа ыхрана вĕтĕ-вĕтĕ тураса тип çупа ăшаламалла, тăварпа пăрăç калаттармалла, унтан 1 стакан шыв хушса вĕреме кĕртмелле. Соуса кастрюльти аш çине ярса йăваш çулăм çинче çурма хатĕр пуличчен пăшăхламалла. Купăста турамалла, тăварлă шывра пĕçермелле. Дуршлаг витĕр сăрăхтармалла, унтан аш пиçекен кастрюле ярса хатĕр пуличчен пăшăхламалла.

## УСĂ КУРМА

### Ыхрана – кĕл ăшĕнче

Фанера ешчĕк тĕпне 1-2 см хулăнăш кĕл сапмалла, унтан ыхрана çумма-çуммăн «кучĕпе» лартса тухмалла. Çакăн хыççăн пуçĕ хупланиччен кĕлпе сапмалла (патакки курăнса тăтăрах), каллех тепĕр сий ыхра хумалла, кĕл сапмалла. Ешчĕке хупласа урайне лартмалла. Çуллачченех питĕ лайăх упранĕ.

## ТАВ СĂМАХĔ

### Купăс ăстисем пур-ха

Нумаях пулмасть купăс юсакансене шыраса хаçатран пулăшу ыйтса çырнăччĕ эпĕ. Хаçат манăн çырăва тата купăс юсакан çыннăн телефонне пичетлесе кăларчĕ. Çакăн хыççăн ман пата пĕрин хыççăн тепри шăнкăравлама пуçларĕç: пурте пулăшасшăн. Пĕр-икĕшĕнпе вулакансене те паллаштарам. Вăрмар районĕнчи Кавал çынни, Михаил Табаков (унăн телефонĕ 8 967 794 36 62), хăй ялсем тăрăх çӳресе купăс юсанине пĕлтерчĕ. Тепри Хĕрлĕ Чутай районĕнчен, купăспа çав тери чаплă калаканскер, юсама та маçтăр иккен. Шел, унăн ятне астуса юлаймарăм. Телефонĕ çапла: 8 927 844 70 11. Эпĕ хамăнне юсама кайса патăм ĕнтĕ. Чăвашра çавăн чухлĕ ăста пуррине пĕлмен те. Хаçата çырман пулсан паян кунччен çĕмрĕк купăсăмпа ларattăм пулĕ. Тавах, «Хресчен сассине».

**Анатолий ВАСИЛЬЕВ.**
**Йĕпреç районĕ, Малиновка ялĕ.**



**34 çулти ĕçчен арçын ялта пурăнма килĕшекен йĕркеллĕ 30-35 çулсенчи хĕрпе е хĕрарăмпа çемье çавăрасшăн. Ача пурри чăрмав мар. 20 сехет хыççăн шăнкăравлăр – тел. 89278550602.**

## САЛАМЛАТПĂР!





Шупашкар районĕнчи Вăрманкас ялĕнче пурăнакан **Мария Ивановна НИКОЛАЕВĂН** паян çуралнă кунĕ. Çак ятпа ăна чунтан саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Пурнăç тăршшĕпех ыр курса пурăнах, ырă çыннăмăр.

**Ачисем, кинĕсем, мăнукĕсем, çывăх тăванĕсем.**

## ХАЛЬХИ СИПЛЕВ

# СЫВЛĂХШĂН КАШНИ ЯВАПЛĂ

КАБИНЕТ МАГНИТНО-РЕЗОНАНСНОЙ ТОМОГРАФИИ
ЛДЦ МИБС ЧЕБОКСАРЫ
Лечебно-диагностический центр
Международного института биологических систем

**Тухтăр янипе е харпăр хăйне мĕн те пулин канăçсăрлантарнипе çын магнит-резонанс томографийĕпе (МРТ) сывлăха тĕрĕслеттересшĕн. Анчах ăçта каяс, мĕнле сиплев учреждение суйласа илес текен ыйту канăçсăрлантарать. Биологи тытăмĕн пĕтĕм тĕнчери институчĕн сиплевпе диагностикăн Шупашкарти центрĕ (ЛДЦ МИБС) Чăваш Ен тата Мари Эл халăхне пилĕк çул ĕнтĕ йышăнать, çак вăхăтра вăл ырă ят çĕнсе илме пултарчĕ.**



**Шупашкарти ЛДЦ МИБС центрĕн ĕçĕ-хĕлĕпе пире пĕрремĕш квалификаци категориллĕ рентгенолог врач Людмила МИГУШКИНА паллаштарчĕ.**

– Магнит-резонанс томографне магнит витĕмне кура хакланçĕ. Унăн витĕмĕ мĕн чухлĕ пысăкрах – çавăн чухлĕ лайăхрах. Çак вăхăтрах тĕрĕслев ирттерекен персоналăн опычĕ те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Томограф хальхи йышши пулсан та диагноз палăртасси "конвейер" юхăмĕпе пымалла мар. Аппаратăн ĕç процесне кирлĕ пек йĕркелесе тăмалла. Тĕпчев ирттернĕ чухне специалистăн питĕ тимлĕ пулмалла – кашни органа пур енлĕн ӳкермелле, шыçăсем пуррипе çуккине, вĕсем ăçта тата мĕнле вырнаçнине питĕ тимлĕ пăхмалла. Тĕрĕс диагноз çеç тухтăра кирлĕ сиплеве палăртма пулăшать.

**– Шупашкарти ЛДЦ МИБС специалисчĕсен ăсталăхĕ тивĕçтерет-и?**

– Пирĕн республикăн тĕп хулинчи ЛДЦ МИБС специалисчĕсем ирттернĕ тĕрĕслевсем хальхи медицина ыйтăвĕсемпе килĕшсе тăраççĕ. Вĕсен пĕтĕмлетĕвĕсемпе çĕршыври тĕрлĕ клиникăра йышăнаççĕ çеç мар, диагнозĕсене пысăк хак параççĕ. Пирĕн тухтăрсем пурте Биологи тытăмĕн пĕтĕм тĕнчери институчĕн сиплевпе диагностикăн Питĕрти центрĕнче пĕлĕве ӳстернĕ. Паянхи кун Шупашкарта ЛДЦ МИБС икĕ центрĕ ĕçлет. Вĕсенче сывлăха "Siemens" фирмăн анлă витĕмлĕ (хăвачĕсем – 1.0 тата 1.5 Тесла) томографĕсемпе тĕрĕслеççĕ. Çакăн пек хальхи йышши томографсем пурри пирĕн ăста тухтăрсене пациентсене тĕрĕсленĕ чухне кулленхи ĕçхĕлре чи çĕнĕ методикăсемпе усă курма пулăшать. Сертификаци витĕр тухнă инженерсем хамăрăн пурри вара аппаратурăна тивĕçлĕ шайра тытса тăма май парать.

**– Томографи тĕпчевĕ ирттерекен ытти учрежденирен сирĕн центрсем мĕнпе уйрăлса тăраççĕ?**

– Шупашкарти МРТ икĕ центрĕ те – Питĕрти Биологи тытăмĕн пĕтĕм тĕнчери институчĕн сиплевпе диагностика уйрăмĕсем. Çĕршывĕпе çакăн йышши 60 центр ĕçлет. Центрсем пĕр-пĕринпе телемедийлă çыхăнура тăраççĕ. Кашни диагноза ятарлă консультаци центрĕнче пысăк опытлă тĕрлĕ специалист тепĕр хут тĕпчесе çирĕплетет. Пирĕн консультант врачсен кашни кун кăткăс та хăйне евĕр ыйтусене пăхса тухма тивет, çавна май вĕсем диагноз палăртассипе питĕ пуян опыт пухнă. Центрти тухтăрсем пурте тенĕ пекех магнит-резонанс томографийĕ енĕпе диссертаци хӳтĕленĕ, наукăра малалла аталанаççĕ.



**– Усал шыçăсене палăртсан вĕсенчен сирĕн патăртах сипленме пулать-и?**

– ЛДЦ МИБСăн радиохирурги центрĕ пур. Унта "Гамма-нож" тата "Кибер-нож" ятлă хальхи оборудованипе тĕрлĕ çĕрте вырнаçнă шыçăсене сиплеççĕ. Кирлĕ пулсан шыçça пайăрка терапийĕпе юнашарти сывă тĕртĕмсене лектермесĕр витерме пултараççĕ.





Реклама

***Енчен те хăвăра япăх туятăр, пуç е çурăм ыратать, сыпăсем, пĕвер е хырăм ай парĕ канăçсăрлантарма пуçларĕç пулсан вăхăта вăраха ямасăр пирĕн центрсене килсе тĕрĕсленĕр.***

***Эпир кашни кун ирхи 6 сехетрен пуçласа каçхи 23 сехетчен ĕçлетпĕр. Кану тата уяв кунĕсенче те пирĕн центр алăкĕсем уçă.***

Тĕрĕсленме килес текенсем çак телефонсемпе шăнкăравласа çырăнма пултараççĕ:

**8(8352) 23-56-84, 23-56-27.** Шупашкар хули, Трактор тăвакансен проспекчĕ, 46 («Хулан 1-мĕш клиника больници» БУ).

**8(8352) 23-81-20, 23-81-21.** Шупашкар хули, Гагарин урамĕ, 53 («Хулан 2-мĕш больници» БУ).

*ЛО-21-01-001040 лицензине ЧР Сывлăх сыхлав министерстви 18.03.2014 çулта панă.*

**СПЕЦИАЛИСТПА КАНАШЛĂР, ТĔРĔСЛЕВ КАМА ТАТА ХĂÇАН ЮРАМАННИНЕ ЫЙТСА ПĔЛĔР**

## ЧĂВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем çинче)

**Туntикун, декабрĕн 22-мĕшĕ**

6.30-07.00 Ялтан яла. (12+) 7.10-8.00 Янра, юрă! (хит-парад). (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Тема дня. (12+). 15.30-16.00 Çĕр сум. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 10.30-11.00 Символ веры. (12+) 11.30-12.00 Ялтан яла. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 15.30-16.00 Măшăр çунат. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.30-18.00 Перекресток. (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунтикун – эрнекун**

6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 - Хыпарсем. (12+)
8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 - Новости. (12+)

**Ытларикун, декабрĕн 23-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 9.30-10.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 10.30-11.00 Социальный вопрос. (12+) 11.10-11.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00, 22.30-23.00 Çемье ăшши. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Çĕр сум. (12+) 18.30-19.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 19.30-20.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Юнкун, декабрĕн 24-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 10.10-10.30, 11.10-11.30, 14.10-14.30,15.10-15.30, 16.10-16.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 9.10-10.00 Женская среда. (12+) 10.30-11.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 11.30-12.00 Çĕр сум. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Çемье ăшши. (12+) 15.30-16.00 Перекресток детский. (6+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.10-18.00 Пĕччен мар. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Бумеранг. (12+) 22.30-23.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем.(12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Кĕçнерникун, декабрĕн 25-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 8.10-8.30, 9.10-9.30, 14.10-14.30, 17.10-17.30, 20.10-20.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 23.30-23.00 Республика сасси. (12+) 10.10-11.00 Пĕччен мар (12+) 11.10-12.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 15.10-16.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Ачалăх урхамахĕ. (12+) 18.10-19.00 Тăван ăс-хакăл. (Çĕнĕ çул умĕнхи кăларăм) (12+) 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Студгородок. (12+) 20.30-22.00 Çичĕ юрă. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Эрнекун, декабрĕн 26-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30 Республика сасси . (12+) 8.10-8.30, 14.10-14.30, 18.10-18.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 10.10-11.00 Тăван ăс-хакăл. (Çĕнĕ çул умĕнхи кăларăм) (12+) 11.30-12.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Çĕр сум. (12+) 15.10-16.00 Пачăшкă сăмахĕ. (12+) 16.10-16.30,17.10-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 17.30-18.00 Чĕрере çуралнă сăвăсем. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Присягая Родине. (12+) 20.10-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Шăматкун, декабрĕн 27-мĕшĕ**

6.00-7.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 7.05-8.00 Женская среда. (12+) 9.05-9.30, 10.05-10.30, 15.05-15.30, 16.05-16.30, 18.10-18.30, 19.05-19.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 9.30-10.00 Рабочая смена. (12+) 10.30-11.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 11.05-11.30, 15.05-15.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 12.00-12.10, 16.00-16.10 Хыпарсем. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 1 пайĕ. (12+) 15.30-16.00 Пурнăç çынни. (12+) 16.30-17.00 Студгородок. (12+) 17.30-18.00 Шурăм пуç. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Вырсарникун, декабрĕн 28-мĕшĕ**

6.05-6.30, 7.05-7.30, 9.05-9.30, 15.05-15.30 Юрă вăчăри. (12+) 6.30-7.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 7.30-8.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 8.05-8.30, 11.05-11.30, 16.10-16.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 8.30-9.00 Присягая Родине. (12+) 9.30-10.00 Шурăм пуç. (12+) 10.05-11.00 Çичĕ юрă. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 2 пайĕ. (12+) 15.30-16.00 Пурнăç çынни. (12+) 16.30-17.00 Рабочая смена. (12+) 17.10-18.00 Пĕччен мар. (12+) 18.10-19.00 Иксĕлми çăлкуçсем. (12+) 19.05-20.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)
**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

## ТУНТИКУН, 22

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 1.00, 3.00 Новости
9.15, 4.25 Контрольная закупка
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 Модный приговор
12.15, 21.30 Т/с «МАЖОР» 16+
14.25, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 2.50, 3.05 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.00 «Познер» 16+
1.15 Т/с «ВЕГАС» 16+
3.40 «В наше время» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Золотое дно Охотского моря»
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «СЕРДЦЕ ЗВЕЗДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ПО ГОРЯЧИМ СЛЕДАМ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «БРАТЬЯ ПО ОБМЕНУ-2» 12+
0.45 «Краснодарский спрут. Коррупция по-советски»
1.50 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
4.20 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 11.35-11.55, 17.10-17.30 Вести-Чӑваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.25 «Прокурорская проверка» 16+
9.35, 10.30 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.55 Суд присяжных 16+
13.30 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.45 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.20, 16.30 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
20.00, 23.40 Т/с «ЧУЖОЙ» 16+
23.00 «Анатомия дня»
0.40 Т/с «ЧЕЛОВЕК НИОТКУДА» 16+
2.40 Дикий мир 0+
3.10 Т/с «КЛЕЙМО» 16+
5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### РОССИЯ К

7.00 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.10 Новости культуры
10.15 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «РАССЛЕДОВАНИЯ КОМИССАРА МЕГРЭ». «ПОРТ ТУМАНОВ»
12.00 «Мировые сокровища культуры»
12.15 Вспоминая Николая Пастухова. «Эпизоды»
12.55, 22.40 Д/с «Апостолы». «Фома»
13.20 Х/ф «КАК ВАМ ЭТО ПОНРАВИТСЯ»
15.10 Academia

## ЫТЛАРИКУН, 23

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.15, 3.00 Новости
9.15 Контрольная закупка
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 Модный приговор
12.15, 21.35 Т/с «МАЖОР» 16+
14.25, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00, 3.15 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 2.25, 3.05 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.40 «Вечерний Ургант» 16+
0.30 «Структура момента» 16+
1.35 Т/с «ВЕГАС» 16+
4.00 «В наше время» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00, 3.40 «Бэкфайр», «Бьюти» и другие. Сто лет дальней авиации»
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «СЕРДЦЕ ЗВЕЗДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ПО ГОРЯЧИМ СЛЕДАМ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «БРАТЬЯ ПО ОБМЕНУ-2» 12+
23.50 Т/ф «Своя земля»
1.00 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
4.25 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 11.35-11.55, 17.10-17.30 Вести-Чӑваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Доступная среда. С сурдопереводом
9.15 Туристический маршрут
9. 30-9.55 Точка зрения
14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.25 «Прокурорская проверка» 16+
9.35, 10.30 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.55 Суд присяжных 16+
13.30 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.45 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.20, 16.30 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
20.00, 23.40 Т/с «ЧУЖОЙ» 16+
23.00 «Анатомия дня»
0.40 Т/с «ЧЕЛОВЕК НИОТКУДА» 16+
2.35 Главная дорога 16+
3.05 Т/с «КЛЕЙМО» 16+
5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.10 Новости культуры
10.15, 1.55 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «РАССЛЕДОВАНИЯ КОМИССАРА МЕГРЭ». «ПОРТ ТУМАНОВ»
12.00, 16.40 «Мировые сокровища культуры»
12.15 «Острова»
12.55, 22.40 Д/с «Апостолы». «Симон и Фаддей»
13.20, 0.00 Х/ф «ОСКАР УАЙЛЬД»

## ЮНКУН, 24

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.10, 3.00 Новости
9.15 Контрольная закупка
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 Модный приговор
12.15 Т/с «МАЖОР» 16+
14.25, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00, 3.10 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 2.20, 3.05 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.35 Т/с «ПОД КАБЛУКОМ» 12+
23.35 «Вечерний Ургант» 16+
0.25 «Политика» 16+
1.25 Т/с «ВЕГАС» 16+
4.00 «В наше время» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00, 3.30 «Диктор Иванович. Солдат телевидения»
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «СЕРДЦЕ ЗВЕЗДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ПО ГОРЯЧИМ СЛЕДАМ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «БРАТЬЯ ПО ОБМЕНУ-2» 12+
23.50 Т/ф «Своя земля»
1.00 Х/ф «КОЛЬЕ ШАРЛОТТЫ»
4.15 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 11.35-11.55, 17.10-17.30 Вести-Чӑваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.25 «Прокурорская проверка» 16+
9.35, 10.30 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.55 Суд присяжных 16+
13.30 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.45 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.20, 16.30 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
20.00, 23.40 Т/с «ЧУЖОЙ» 16+
23.00 «Анатомия дня»
0.40 Т/с «ЧЕЛОВЕК НИОТКУДА» 16+
2.40 Квартирный вопрос 0+
3.40 «ДНК» 16+
4.40 Дикий мир0+
5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.10 Новости культуры
10.15, 1.55 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «РАССЛЕДОВАНИЯ КОМИССАРА МЕГРЭ». «МОЙ ДРУГ МЕГРЭ»
12.00, 16.40 «Мировые сокровища культуры»
12.15 «Острова»
12.55, 22.40 Д/с «Апостолы». «Филипп и Варфоломей»
13.20, 0.00 Х/ф «КАК ВАЖНО БЫТЬ СЕРЬЕЗНЫМ»
15.10 Academia
16.00 Искусственный отбор

## КĔҪНЕРНИКУН, 25

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.10, 3.00 Новости
9.15 Контрольная закупка
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 Модный приговор
12.20, 21.35 Т/с «ПОД КАБЛУКОМ» 12+
14.25, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00, 3.05 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 2.15 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.35 «Вечерний Ургант» 16+
0.25 На ночь глядя 16+
1.20 Т/с «ВЕГАС» 16+
3.50 «В наше время» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00, 2.45 «Трофейная Германия» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «СЕРДЦЕ ЗВЕЗДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ПО ГОРЯЧИМ СЛЕДАМ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «БРАТЬЯ ПО ОБМЕНУ-2» 12+
22.50 «Вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
0.30 «Сухой» Выбор цели»
1.30 Х/ф «КОЛЬЕ ШАРЛОТТЫ»
3.35 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 11.35-11.55, 17.10-17.30 Вести-Чӑваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Доступная среда
9.15 Туристический маршрут
9.30-9.55 Точка зрения
14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.25 «Прокурорская проверка» 16+
9.35, 10.30 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.55 Суд присяжных 16+
13.30 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.45 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.20, 16.30 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
20.00, 23.40 Т/с «ЧУЖОЙ» 16+
23.00 «Анатомия дня»
0.40 Т/с «ЧЕЛОВЕК НИОТКУДА» 16+
2.40 «Дачный ответ» 0+
3.45 «Враги народа» 16+
4.35 Дикий мир 0+
5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.10 Новости культуры
10.15, 1.55 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «РАССЛЕДОВАНИЯ КОМИССАРА МЕГРЭ». «МОЙ ДРУГ МЕГРЭ»
12.05 Д/ф «Лоскутный театр»
12.15 «Острова»
12.55, 22.40 Д/с «Апостолы». «Павел»

## ЭРНЕКУН, 26

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
9.15 Контрольная закупка
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 Модный приговор
12.20 Т/с «ПОД КАБЛУКОМ» 12+
14.25, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00, 4.15 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Жди меня»
18.45 «Человек и закон» 16+
19.50 «Поле чудес» Новогодний выпуск 16+
21.00 «Время»
21.35 «Голос» Финал 12+
23.50 «Вечерний Ургант» 16+
0.45 Х/ф «СОБЛАЗНЕННЫЕ И ПОКИНУТЫЕ» 16+
2.35 Х/ф «ВЛИЯНИЕ ГАММА-ЛУЧЕЙ НА БЛЕДНО-ЖЕЛТЫЕ НОГОТКИ» 16+
5.00 «В наше время» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
8.55 Мусульмане
9.10 «Крымская фабрика грез»
10.05 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50, 4.25 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «СЕРДЦЕ ЗВЕЗДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «ПО ГОРЯЧИМ СЛЕДАМ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
21.00 Специальный корреспондент 16+
23.00 Х/ф «КРОВЬ С МОЛОКОМ» 12+
1.00 Х/ф «СЛОН И МОСЬКА» 12+
2.40 Горячая десятка 12+
3.40 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 11.35-11.55, 17.10-17.30 Вести-Чӑваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.10 Газпром, в гармонии с природой
9.45-10.05 Точка зрения
11.35-11.55 Вести-ПФО
14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.25 «Прокурорская проверка» 16+
9.35, 10.30 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.55 Суд присяжных 16+
13.30 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.45 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.20, 16.30 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.45 Х/ф «БИРЮК» 16+
23.25 «Список Норкина» 16+
0.30 Т/с «ДОЗНАВАТЕЛЬ» 16+
3.15 Х/ф «ДЕЛО ТЕМНОЕ» 16+
4.10 Дикий мир 0+
4.40 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.10 Новости культуры
10.20 Х/ф «КАКОЕ ОНО, МОРЕ?»
11.50 «Больше, чем любовь»
12.35 «Письма из провинции»
13.05, 0.00 Х/ф «ДЭВИД КОППЕРФИЛЬД»
15.10 «Царская ложа» Мариинский театр

## ШӐМАТКУН, 27

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.10 Х/ф «СВОЙ СРЕДИ ЧУЖИХ, ЧУЖОЙ СРЕДИ СВОИХ»
8.00 «Играй, гармонь любимая!»
8.45 «Смешарики. Новые приключения»
9.00 Умницы и умники 12+
9.45 «Слово пастыря»
10.15 Смак 12+
10.55 «Три жизни Эммануила Виторгана» 16+
12.15 «Идеальный ремонт»
13.15 Х/ф «СОБАКА НА СЕНЕ»
15.45 «Михаил Боярский. Один на всех» 12+
16.50 «Кто хочет стать миллионером?»
18.15 «Ледниковый период» Финал
21.00 «Время»
21.30 «Сегодня вечером» 16+
23.10 «Что? Где? Когда?» Финал года
0.50 Х/ф «ОТПУСК ПО ОБМЕНУ» 16+
3.15 Х/ф «ПОЖАР» 16+
4.35 «В наше время» 12+
5.20 Контрольная закупка

### РОССИЯ 1

4.45 Х/ф «ОДУВАНЧИК» 12+
6.35 «Сельское утро»
7.05 Диалоги о животных
8.00, 11.00, 14.00, 20.00 Вести
8.10, 11.25, 14.25 Местное время. Вести-Москва
8.20 «Военная программа» Александра Сладкова
8.50, 3.40 «Планета собак»
9.25 Субботник
10.05 «Моя планета» представляет. «Одна на планете. Исландия. Женский род»
11.35 «Честный детектив» 16+
12.05, 14.35 Х/ф «ПРОДАЕТСЯ КОШКА» 12+
15.05 «Это смешно» 12+
17.55 Х/ф «СВАДЬБЫ НЕ БУДЕТ» 12+
20.30 Х/ф «СЛАБАЯ ЖЕНЩИНА» 12+
0.25 Х/ф «ТАРИФ «СЧАСТЛИВАЯ СЕМЬЯ» 12+
2.15 Х/ф «НЕВЕСТА» 12+
4.10 Комната смеха

### ЧТВ

8.10-8.20 Вести-Чӑваш Ен
10.05-11.00 Для вас, любимые. Концерт по заявкам
14.25-14.35 Вести-Чувашия

### НТВ

5.40, 2.55 Т/с «ДОРОЖНЫЙ ПАТРУЛЬ» 16+
7.25 Смотр 0+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00 Сегодня
8.15 «Золотой ключ» 0+
8.45 «Медицинские тайны» 16+
9.20 «Готовим с Алексеем Зиминым» 0+
10.20 Главная дорога 16+
10.55 Кулинарный поединок 0+
12.00 Квартирный вопрос 0+
13.20 «Поедем, поедим!» 0+
14.00, 16.15 Х/ф «НАЗНАЧЕНА НАГРАДА» 12+
18.00 Следствие вели...16+
19.00 «Центральное телевидение» с Вадимом Такменевым
20.00 «Новые русские сенсации» 16+
21.00 «Филипп-король. Как это было» 16+
22.20 «Технология бессмертия» 16+
23.25 «Мужское достоинство» 18+
0.00 Т/с «ДОЗНАВАТЕЛЬ» 16+
4.50 Дикий мир 0+
5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00 Библейский сюжет
10.35 Х/ф «СОБАКА НА СЕНЕ»
12.50 Большая семья. Егор Кончаловский
13.45 Пряничный домик. «Северная роспись»
14.15 Д/с «Нефронтовые заметки»
14.45 «80 лет Николаю Сличенко. «Театральная летопись. Избранное»
15.30 «МЫ - ЦЫГАНЕ» Спектакль театра «Ромэн» Постановка Николая Сличенко. Запись 1986 года

## ВЫРСАРНИКУН, 28

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00 Новости
6.10 Х/ф «ОДИНОЧНОЕ ПЛАВАНИЕ»
8.10 «Армейский магазин» 16+
8.45 «Смешарики. ПИН-код»
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Непутевые заметки» 12+
10.35 «Пока все дома»
11.25 Фазенда
12.15 «Теория заговора» 16+
13.15 «Черно-белое» 16+
14.20 «Евгения Добровольская. Все было по любви» 12+
15.25 «Голос» Финал 12+
17.45 «Голос. На самой высокой ноте»
18.50, 22.30 Церемония вручения народной премии «Золотой граммофон» 12+
21.00 Воскресное «Время» Итоги года
23.50 Х/ф «ОЗ: ВЕЛИКИЙ И УЖАСНЫЙ» 12+
2.15 Х/ф «НА САМОМ ДНЕ» 16+
4.00 «В наше время» 12+

### РОССИЯ 1

5.15 Х/ф «СЕМЬ ВЕРСТ ДО НЕБЕС» 12+
7.20 Вся Россия
7.30 Сам себе режиссер
8.20 «Смехопанорама» Евгения Петросяна
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному»
10.20 Местное время. Вести-Москва. Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.10 «Кулинарная звезда»
12.10 Х/ф «СВАДЬБА» 12+
14.20 Местное время. Вести-Москва
14.30 «Смеяться разрешается»
16.10 Х/ф «ВОПРЕКИ ВСЕМУ» 12+
20.00 Вести недели
22.00 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
23.50 Х/ф «ПЯТЬ ЛЕТ И ОДИН ДЕНЬ» 12+
1.50 Х/ф «СТРЕЛЯЙ НЕМЕДЛЕННО!» 12+
3.30 «Моя планета» представляет. «Одна на планете. Исландия. Женский род»
4.20 Комната смеха

### ЧТВ

10.20-11.00 Вести-Чувашия. События года

### НТВ

6.05, 3.00 Т/с «ДОРОЖНЫЙ ПАТРУЛЬ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00 Сегодня
8.15 «Русское лото плюс» 0+
8.45 «Хорошо там, где мы есть!» 0+
9.25 Едим дома 0+
10.20 «Первая передача» 16+
11.00 «Чудо техники» 12+
11.50 «Дачный ответ» 0+
13.20 «Поедем, поедим!» 0+
14.00, 16.15 Х/ф «ПОЕЗД НА СЕВЕР» 16+
18.00 Чрезвычайное происшествие. Обзор за неделю
19.00 «Сегодня. Итоговая программа» с Кириллом Поздняковым
20.10 Х/ф «РУССКИЙ ХАРАКТЕР» 16+
22.05 Х/ф «ХОЛОДНОЕ БЛЮДО» 16+
0.05 Т/с «ДОЗНАВАТЕЛЬ» 16+
5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00 «Обыкновенный концерт с Эдуардом Эфировым»
10.35 Х/ф «БЛАГОЧЕСТИВАЯ МАРТА»
12.55 «Легенды мирового кино» Анатолий Кторов
13.25 Россия, любовь моя! «Камчатские коряки. Благодарность огню»
13.50 Гении и злодеи. «Луи Жан Люмьер - Томас Эдисон. Неоконченная война»
14.20, 0.25 Д/ф «Белый медведь»
15.10 Детский хор России, Валерий Гергиев и симфонический оркестр Мариинского театра. Концерт в Мариинском-2
16.35 «Пешком...»
17.00 Юбиляры года. Вячеслав Шалевич. Линия жизни
18.00 Итоговая программа

## ҪАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 19.12 | 20.12 | 21.12 | 22.12 | 23.12 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Температура, °С | 2-4 сехетре | –4 | –4 | –1 | –5 | –10 |
| | 14-16 сехетре | –2 | +1 | –1 | –1 | –4 |
| Юр ҫăвать | | ⁂ | – | – | – | ⁂ |
| Атмосфера пусăмĕ, мм. | | 747 | 738 | 740 | 741 | 739 |

АУ «Издательский дом «Хыпар»
**требуется**
**МЕНЕДЖЕР ПО РЕКЛАМЕ**
*Зарплата высокая + %*
Справки по телефонам:
56-00-67, 56-04-14.

АУ «Издательский дом «Хыпар»
**СДАЕТ ПОМЕЩЕНИЯ ПОД ОФИС**
на 7 этаже Дома печати
Справки по телефонам:
28-83-70, 56-04-14.

## РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРӲСЕМ

### *СУТАТĂП / ПРОДАЮ*

**659. ОКНА** и **ПОТОЛКИ.** Немецкое качество. Монтаж по ГОСТу. **Пенсионерам скидки.** Рассрочка.Т. 89176627164.

**736. КОЛЬЦА колодезные** – 0,7; 1,0; 1,5. Доставка. Т.: 89033797768, 362623.

**779. Кирпич** рядовой, лицевой; **керамблоки, кольца.** Доставка. Т.: 89063804835, 89276674605.

**787. Кирпич** любой, **гравмассу, песок, щебень.** Д-ка. Т. 89033228078.

**792. Нетелей черно-пестрой породы** со сроком отела в марте и апреле – в Шумерлинском районе. Т. 8-927-844-45-00.

### *ПУЛĂШУ / УСЛУГИ*

**32. Лечение алкоголизма.** Анонимно. Консультация бесплатная с 8 до 19 ч., сб., воскр. с 8 до 13 ч. А: Чеб., пр. Ленина, 56. **Т. 552733.**
*Лиц. ЛО 21-01-001 096 от 06.06.2014г. МЗСР РФ. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**63. Известный** Чебоксарский **экстрасенс,** маг, хиромант, астролог **Олег Боголюбов** решает многие жизненные проблемы. Т. 89674743783.

**152. Бурение** скважин на воду. Т. 89603021293.

**660. Утепление домов эковатой.** Профессиональный монтаж. Гарантия кач-ва. Доступные цены. Рассрочка. Т. 89196691666.

**744. Натяжные ПОТОЛКИ** за 1 день. Т. 8-937-397-24-42.

**789. РЕМОНТ:** эл/пилы, рубанки, болгарки, зернодробилки, дрели, пылесосы, соковыжималки, мясорубки; **ПЕРЕМОТКА** эл. двигателей, якорей. **Т. 8-905-027-46-59** (г. Чебоксары, Гладкова, 9).

### *ТУЯНАТĂП / КУПЛЮ*

**332. Бычков, телок, коров, свиноматок.** Т. 89279993737.

**433. Коров.** Т. 89278508564.

### *ĔҪ / РАБОТА*

**54. Монолитчики, каменщики** в Подмосковье. Вахта, жилье, питание. Т. 8-917-673-77-73.

**110.** В связи с началом строительства нового объекта **требуются монолитчики, каменщики.** Тел. 8-925-002-22-38.

**«ХРЕСЧЕН САССИ»**
**Обществăпа политика хаҫачĕ**
**Индекс 54838**
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство ҫурчĕ» Чăваш Республикин хайтытăмлă учрежденийĕ

**ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – В.В. ТУРКАЙ**
**Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)**
**Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.**
**Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор ҫумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06**

**www.hypar.ru,**
**e-mail: atal-volga@mail.ru**

Хаҫата 2013 ҫулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин ҫыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 № регистрациленĕ.
Хаҫата «Хыпар» Издательство ҫурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

**Графикпа 17 сехетре алă пусмалла. 17 сехетре алă пуснă.**
**Заказ 4889**
**Тираж 20834**

* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.